«Суд реформи: çыннăн тата гражданен прависемпе ирĕкĕсене хўтĕлесси»

Ĕçри тивĕçсене кирлĕ пек пурнăçламасан

Район судĕнче тĕрлĕрен уголовнăй тата гражданла ĕçсене пăхса тухатпăр. Преступлени тунă кашни çын саккунпа килĕшўллĕн явап тытать.

Акă ман умра 2007 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче пăхса тухнă уголовнăй ĕç. 2006 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Шомикре вырнаçнă ревматизпа чирлĕ ачасен «Лесная сказка» республикăри ача-пăча санаторийĕнче вар-хырăм инфекцийĕ сарăлни çинчен районта пурăнакансем илтнех ĕнтĕ. Ун чухне асăннă санаторинче сипленекен 106 ачапа пĕр ачан амăшĕ вар-хырăм чирĕпе медицина учрежденине лекнĕ. Суд асăннă санаторин шеф-поварне С. М. Елимована РФ УК 236 статйин 1-мĕш пайĕнче кăтартнă преступление тунăшăн айăпларĕ. Урăхла каласан, хăйĕн должноçпа пăхнă тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаншăн. 2006 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче çак санатори поварĕсем каçхи апат хатĕрленĕ чух асăрханусăр пулнипе апата «Зоне шигеллы микрофлора» лекнĕ.

Суд ларăвĕнче айăпланакан хăйне айăпланипе пĕтĕмпех килĕшмерĕ. Вăл каланă тăрăх, апат-çимĕç блокĕнчи санитари тĕлĕшĕнчи лару-тăрупа унта ĕçлекенсем вăхăтра медосмотр тухнишĕн чăннипех те вăл яваплă пулса тăрать, анчах та ачасем çапла нумайăн чирленишĕн хăйĕн айăпĕ çук, тесе шутлать. Роспотребнадзор специалисчĕсем тупса палăртнă санитари нормисемпе правилисене пăснă тĕслĕхсем çакнашкал инкек патне илсе пыма пултарайман имĕш. Ачасем сентябрĕн 11 тата 12-мĕшĕсенче Вăрнарти çусăр типĕ сĕт хатĕрлекен заводра кăларнă кефир çинипе чирленĕ тесе шутлать. Анчах та С.М. Елимован айăпне инкек тўсекенсен кăтартăвĕсемпе судмедэкспертиза заключенийĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Тĕслĕхрен, инкек тўсекен хĕр ача каланă тăрăх, вăл мĕнпе сиенленнине пĕлмест, анчах санаторинче нимĕнле сĕт-çу продукчĕ те çимен. Мĕншĕн тесен сĕтрен хатĕрленĕ продуктсенчен йогурт анчах çиет. Судмедэкспертиза та хĕр ача çўлерех асăннă инфекцин йывăр формипе чирленине çирĕплетсе парать. Инкек тўснĕ кашни çынпа вĕсем тĕлĕшпе кăларнă судмедэкспертиза заключенийĕсем те шефповар хăйĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаннине, апат-çимĕç блокĕнче лару-тăрава контроллеменнине çирĕплетсе параççĕ.

Район сучĕ С.М. Елимована РФ УК 236-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче кăтартнă преступление тунăшăн айăплă тесе йышăнчĕ. Ана 25 пин тенкĕ штраф тўлемелле турĕ. Суд çавăн пекех унран мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн Е.А. Выставкина валли 2 пин тенкĕ тата Л.В. Макарова валли 5 пин тенкĕ шыраса илмелле турĕ.

«Лесная сказка» санаторинче сиенленсе стационарта сипленнĕ ачасен ашшĕ-амăшĕсем район судне иск заявленийĕпе тухрĕç. Вĕсем унта «Лесная сказка» санаторинчен хăйсене тата вĕсен ачисене мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн укçан тавăрса пама ыйтрĕç. Çул çитмен хĕр ачапа унăн амăшĕ хĕр ачине мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн 300 пин, амăшне 200 пин тавăрса пама ыйтрĕç санаторинчен. Тепĕр иск заявленийĕнче инкек тўсекен ачана мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн 250 пин, амăшне эмел илнĕ тăкака шутласа пĕрле 250 пин те 533 тенкĕ те 25 пус тавăрса пама ыйтрĕç. Виççĕмĕш иск заявленине çыракансем санаторинчен ачана мораль тĕлĕшĕнчен сиен кўнĕшĕн 100 пин, амăшне 200 пин шыраса илсе пама ыйтаççĕ.

Асăннă гражданла ĕçе район сучĕ 2007 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче пăхса тухрĕ. Пĕрремĕш иск заявленине çыракансенчен инкек тўснĕ ачана санаторинчен 5 пин тенкĕ, иккĕмĕш иск заявленине çыракансенчен инкек тўсекен арçын ачана санаторинчен 5 пин тенкĕ, амăшне 3 пин тенкĕ, çавăн пекех пурлăх тĕлĕшĕнчен тўснĕ тăкака 477 тенкĕ те 75 пуса тавăрса памалла турĕ. Виççĕмĕш иск заявленине çыракансенчен инкек тўсекен хĕр ачана санаторинчен 3 пин тенкĕ шыраса пама йышăнчĕ. Çавăн пекех асăннă санаторинчен патшалăх валли патшалăх пошлини хакне 300 тенкĕ шыраса илмелле турĕ.

Асăннă уголовнăй тата гражданла ĕçсем кашни çыннах тĕрĕс пĕтĕмлетў тума хистеççĕ: кашнинех хăйĕн ĕç вырăнĕнче должноçпа пăхнă тивĕçсене кирлĕ пек пурнăçламалла.

Э. СТЕПАНОВА,
район сучĕн судйи.

Ыр кăмăллăх марафонĕ

Пулăшма ĕлкĕреймерĕн пулсан, васка

«Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕ малалла пырать. Çак кунсенче марафон счечĕ çине укçа куçаракансем татах та хушăнчĕç. Хаçатăн иртнĕ номерĕсенче асăннă предприятисемпе организацисемсĕр пуçне марафон счечĕ çине район администрацийĕн финанс пайĕ 1945 тенкĕ, Муркаш районĕнчи нотариус кантурĕ 1 пин тенкĕ, Юнкă ял тăрăхĕнчи çамрăксем 722,20 тенкĕ, «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă обществи 5 пин тенкĕ, «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» МУП 600 тенкĕ куçарчĕç. Çапла вара паянхи куна марафон счечĕ çине 57408,20 тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ.

Унсăр пуçне «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх МУП ачасен тумтирĕпе атă-пушмак парса пулăшрĕ. Уйрăм çынсем те ачасене пулăшас тесе тăрăшни курăнать. Муркашра пурăнакан С.А. Ковалева, Калайкассинчи В.Ф. Горланова пенсионерка, Çĕн Шоккăнти З.Н. Поликарпова ачасен кĕпе-тумтирне илсе килчĕç.

Хисеплĕ вулаканăм, ырă ĕç тума нихăçан та кая мар. Çавăнпа та эсĕ пулăшу ыйтса пăхакан ачасен куçĕнчен пăрăнса иртмессе, вăй çитнĕ таран пулăшасса шанас килет. Районти ытти предприятисемпе организацисем, учрежденисем, предпринимательсем те çак ырă утăма паянах тусан аванччĕ.

Хамăр инф.

Ялти хисеплĕ ватă

Хĕрĕх икĕ çул – вăрман хуçалăхĕнче

Ирина Егоровна Скворцова 1918 çулта Хорнуй ялĕнчи хресчен çемйинче çуралнă. Нумаях пулмасть вăл 90 çул тултарчĕ. Ялти хисеплĕ ватăсенчен пĕри вăл.

Вĕсен çемйинче сакăр ача пулнă. Халĕ виççĕшĕ пурăнаççĕ.

Çăмăл пулман Ирина Егоровнан пурнăçĕ. Çити-çитми пурнăç, вăрçă çулĕсем. 1940 çулта вăл Хорнуй каччипе Иван Николаевич Скворцовпа пĕрлешет. Унăн мăшăрĕ лесник пулса ĕçленĕ. Пĕрлешнĕ хыççăн Ирина Егоровна та вăрман хуçалăхĕн ĕçне кўлĕнет.

Вăрçă пуçлансан Иван Николаевича фронта илсе каяççĕ. Пĕтĕм вăрман ĕçĕ çамрăк хĕрарăм хулпуççийĕ çине тиенет: вăрманне те кастармалла, вуттине те хатĕрлемелле, питомникне те пăхмалла...

Ахаль иртмеççĕ вăрçă çулĕсем. Иван Николаевич аманса таврăнать. Апла пулин те вăрмана пăрахмасть, обходчикра тăрăшать. Ирина Егоровна юратнă мăшăрĕпе вăрмантах ĕçлет, питомникра ырми-канми тимлет, вĕллесем пăхать, выльăхчĕрлĕх усрать. 42 çул вăй хурать Ирина Егоровна вăрман хуçалăхĕнче.

Халĕ те ĕçсĕр лармасть хисеплĕ ватă. Кил-çуртра, пахчара ĕçлет, кайăк-кĕшĕк усрать.

Н. БОРИСОВА,
Хорнуй ял библиотекин библиотекарĕ.

Пушар хуралĕ 90 çул тултарнă май

«Артистчĕ, ăста гитаристчĕ»

Çапла аса илеççĕ паян 27 çул пушар хуралĕнче вăй хунă, вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнă Михаил Михайлович Верендеева Кашмашра пурăнакан мăшăрĕ Галина Петровна тата вĕсен хĕрĕсемпе ывăлĕ, çывăх тăванĕсем...

Районти Йăла çуртĕнче 1964 çултанпа кун сиктермесĕр çĕвĕçре 33 çул ĕçленĕ, «Ĕç ветеранĕ» медале тивĕçнĕ Галина Петровна Верендеевапа çурхи ăшă каç çемье архивĕнчи сăн ўкерчĕксене чылай пăхса лартăмăр, вĕсене курса Михаил Михайловича аса илтĕмĕр. Савăнăçлă та кăмăллă пулнă çын пирки ырă

аса илўсем ытларах пулчĕç.

– Хам кўршĕри Çатракасси ялĕнчен пулнăран Мишăна çамрăклах лайăх пĕлнĕ. Унăн савăнăçĕ, шўте юратни, балалайкăпа ăста выляни çамрăк хĕр пуçне çавăрчĕç пулас: 1972 çулта юратсах çемье чăмăртарăмăр, виçĕ ача çуратса ўстертĕмĕр, – аса илет каçхи ĕçсене пуçтарса кĕнĕ Галина Петровна ытларах мăшăрĕ пирки каласа пама тăрăшса.

Хресчен çемйинче çуралса ўснĕ М. Верендеев ачаллах çĕр ĕçне юратса ўснĕ. Вăрçă çулĕнчи ачасем, теççĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенче çуралса ўснĕ ачасене. Михаил Михайлович та çавсен шутне кĕрет. 1940 çулхи кĕркунне çуралнăскер, вăрçă вăхăтĕнчи терт-нушана, выçлăх çулсене ачаллах пайтах курнă. Çавăнпах унăн çынна пулăшас туйăмĕ çирĕпленнĕ. Пурнăç çулĕ çине тухсан вăл хăйĕн ĕç ĕмĕрне районти пушар хуралĕпе çыхăнтарнинчен тĕлĕнме те кирлĕ мар. «Тар юхтарса тунине çулăм тыткăнне парса хамăра хамăр шар кăтартни – пысăк хуйхă. Çак инкексене пĕчĕклетессисахаллатасси кашни çыннăн тĕллевĕ пулмалла», – тенине паян та унпа пĕр вăхăтра пушар хуралĕнче ĕçлеме тўр килнисем ырăпа аса илеççĕ.

– Ĕçне питĕ пысăка хурса хаклатчĕ. Вăл вăхăтсенче (1970-мĕш çулсенче) районта пушарсем çине-çинех пулатчĕç. Техника хăватлă пулманнипе вăй илнĕ çулăма часах чарма та йывăр пулнă. Çавăнпа вăл çулсенче урамсем, пĕр харăсах нумай килсем çунни пĕрре мар пулнă. Çынна е ачасене çăлма пушара кĕни пирки те Мишша ĕçрен таврăнсан пĕрре мар каласа паратчĕ. Пĕррехинче анчахрах ĕçе кĕнĕ пĕр çамрăк пушарнăй çулăма хирĕç тăма хăранăран тепĕр куннех ĕçрен пăрахса кайни пирки пĕлтерчĕ. Куратăр ĕнтĕ, ĕç йывăрлăхĕ куç умĕнчех. Çавăнпах вăл ĕçрен таврăннă çĕре эпĕ яланах ăшă апат хатĕрленĕ, – каласа парать Галина Петровна.

Пушар хуралĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнă М. Верендеев пушă вăхăтра та алă усса ларман: кил-çурт çавăрнă. Канмалли вăхăтсенче алла балалайка е гитара тытса вăл урама тухнине ялти çамрăксем асăрхасах тăнă. Эх, пуçтарăнатчĕç вара çамрăксем!.. Юрă-кĕвĕрен инçетре тăман пушарнăй ялти клуб çумĕнчи халăх пултарулăх ушкăнне те тулли хавалпа çўренĕ, спектакльсенче выляннă. Вăл хăйĕн ролĕсене кулăшла тунинчен ял çыннисем халĕ те аса илсе куласççĕ. Çапла асра юлнă пушар хурал ĕçне чунĕпе парăннă М. Верендеев ял çыннисен асĕнче.

Иртнĕ кĕçнерни кун, апрелĕн 17-мĕшĕнче, СССР Пушар хуралĕн кунĕ пулнăран тата çак службăра вăй хунă вуншар ĕçчен çак куна хăйсен професиллĕ уявĕ тесе йышăннăран, районти пушар хуралĕнче вăл çулсенче службăра тăнă ытти ветерансене те ырăпа асăнса хăвармалла. Вĕсем: пушар хуралĕн малтанхи водителĕсем Н. Т. Тарасов, Н. К. Чернов, Ю. И. Тучев, И. Б. Иванов, В. Е. Павлов, А. П. Богданов инструктор, Мăн Сĕнтĕрти пушар чаçĕн пуçлăхĕ Г. М. Леймов, Муркашри пушар чаçĕн ертўçи Г. М. Пыркин, пушар чаçĕн пуçлăхĕн çумĕ Н. П. Романов, караул пуçлăхĕсем А. А. Архиповпа В. В. Воробьев т. ыт. те.

Анатолий БЕЛОВ.

Сăн ўкерчĕксенче: М. М. Верендеев; 20 çул каялла пушар хуралĕнче тăнисен ушкăнĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Пурнăçпа юрату

Ачалăхри сенкер кун çути
Çупăрларĕ хĕвел ăшшипе,
Хаваслăхри черчен ун тути
Пăшăлтатрĕ çепĕç сассипе.
Ыр юрату, таса юрату
Кăларать-ши хĕлхем чĕререн?
Чĕр юрату, хаяр уйрăлу
Çухалать-ши утас çул çинче?
Çамрăклăхри асамлă самант,
Тараватлă пул шух вăхăтра.
Пит юратуллă сăну ялан
Çул кăтарттăр сана пурнăçра.
Юратура шыран савнăçа
Ĕмĕтре те кĕтсе пурăнма,
Килĕшўре куран канăça
Тусупа пĕр çулпа шав утма.

Тамара МИХАЙЛОВА.

Ваçкасси ялĕ.

Çĕр ыйтăвĕсемпе

Алла усса лармалла мар

Çуркунне çитрĕ. Районта çĕр ĕçĕсем пуçланчĕç ĕнтĕ. Усă курмасăр выртакан çĕрсем пĕрре те ан юлччăр тесен çине тăрса ĕçлемелле паян. Çавăн пекех çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарассипе те лав вырăнтан тапранса инçех каяйман.

– Паян ку ыйтупа çине тăрса ĕçлемелле. Унсăрăн халăх çĕр пайĕсĕр юлма пултарать, мĕншĕн тесен малтан алла панă çĕр акчĕсем 2009 çулхи январьте хăйсен юридици тĕлĕшĕнчи вăйне çухатаççĕ. Унччен районта пурăнакансен çĕр пайне харпăрлăха илни çинчен калакан свидетельствăна алла илмелле, – палăртсах каларĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе ирттернĕ канашлăва (унта Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн çумĕ А.И. Дмитриев, çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлекен республика тата федераллă шайри учрежденисен районти представителĕсем хутшăнчĕç) уçнă май район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Министр çумĕ палăртнă тăрăх, районти хуçалăхсенчен пĕринче те çĕр лаптăкĕсене виçсе палăртассине тĕпрен вĕçлесе çитермен. Александр Иванович канашлура çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарас процедурăсене ансаттатма май пуррине те палăртрĕ, ун çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Калăпăр, çĕр лаптăкне виçсе чиккисене палăртнă. Çак 100 гектар çĕр çинче 50 çыннăн пай çĕрĕсем, тейĕпĕр. Çак çĕр пайĕн хуçисем хăйсен хушшинче пĕр çынна палăртма пултараççĕ. Ыттисем вара унпа килĕшў туса, çак çын çĕр пайĕсен хуçисен доверенноçĕпе çĕр пайĕсене харпăрлăха куçармалли пĕтĕм процедурăсене тума пултарать. Çапла вара 50 çын тĕрлĕ инстанцисенче черетре тăрса та хăшкăлмасть.

Черет тенĕрен, паян регистратура палатинче вăхăт нумай иртни пирки пăшăрханаççĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем. Кунта çакна каласа хăвармалла. Ку службăна тепĕр штат хушса парассипе ĕçлеççĕ. Министр çумĕ каланă тăрăх, çĕр харпăрлăхне ку службăра регистрацилессинче те ырă улшăнусем пулчĕç. Малтан свидетельствăна илес тесен 30 кун кĕтмелле пулнă пулсан, халĕ çĕр пайĕсене 10 кун хушшинче регистрацилеççĕ.

Канашлура Чăваш Республикин Президенчĕн 80 № Указĕ мĕнле пурнăçа кĕнине те тишкерчĕç. Çĕр участокĕсене патшалăх кадастр учетне тата куçман пурлăх объекчĕсене патшалăх учетне илес тапхăр кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнче вĕçленет. Министр çумĕ палăртнă тăрăх, хальлĕхе районĕпе ку ĕç çĕр лаптăкĕсемпе çителĕксĕр пулса пырать.

– Паянхи пек лăпкă пурăнма юрамасть. Çĕр ыйтăвĕсене вăхăта сая ямасăр татса памалла. Кунта вара çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пур службăсен те пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлемелле. Район пуçлăхĕн Ю.А. Иванован çак сăмахĕсемпе килĕшмесĕр тăма май çук. Çакă хамăр пурăнакан ялсемпе урамсене тирпей-илем кĕртессипе туса ирттермелли ĕçсене те пырса тивет. Çавăн пекех çурхи ака-суха ĕçĕсене вăхăтра тата пахалăхлă туса ирттерессинче те пуçарулăх кирлине палăртрĕ Юрий Александрович. Ку тĕлĕшпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ял хуçалăх предприятийĕсен ертўçисемпе пĕр тĕллевлĕн ĕçлемелле, сиксе тухакан ыйтусене пĕрле татса памалла.

Л.ПАВЛОВА.